## ÇЫНПА ÇУТÇАНТАЛĂК

*Кăнтăра вĕççе каякан хура кураксене ирхине каланă ырă çул сăмахĕ*

Тĕкпе те мамăкпа тумланнă,
Сăнпа та сасăпа хитре
Пур кайăк-кĕшĕке йăлт маннăн
Юратмалли сăлтавăм пур.

Çуллен-çулах ман ялăм урлă
Вĕççе иртетчĕ кайăк хур.

Кĕрхи кунра вĕсен хĕн-хурлă
Иртес сăлтав та кăлтăк пур.

Пурин те сассисем пĕр харăс
Çурхи шур пĕлĕт хушшинчен
Ӳксе тăрсассăн, тăрăс-тăрăс
Путек сикет ту тăрринче.

Эп хам та тунсăх сиккелеттĕм
Çерем çинче юр кайсанах,
Çара уран чупса чĕнеттĕм
Пурне те хĕрхенсе анчах.

Мана тăванăр пек ăнланăр
Эсир, хуркайăксем, пĕрре.
Пĕрре пулин те вĕçсе анăр,
Шыври чӳхенĕр Силпире!

Йĕрсе ярас пекех хĕрхеннĕн
Эп тилмĕрсен те, кайăк хур
Тăхтас темерĕ. Çук. Хăйсенĕн
Вĕсен шăпи те çулĕ пур.

Нумай пулмасть-ха кайăк-кĕшĕк,
Тăрна та акăш пур çĕрте
Ме, Атăл хĕрринче те ирĕк
Çӳренĕ те, ĕрченĕ те.

Халь Акăшкӳл те Тăрна шурĕ
Тени çеç юлнă çĕр çинче.
Илем пĕтме-ши вăхăт шурĕ,
Хăех хăрать-и çут тĕнче?

Кирек хăçан та çутçанталăк
Этемшĕн ырă тăнипе
Апачĕ пулнă тăранмалăх,
Çын утнă юрă-кĕвĕпе.

Вăл тумлантарнă, тăхăнтарнă,
Сыртарнă вăл ун урине.
Хăçан пулин те пархатарлă
Çын пулнă-ши ăна хăйне?

Шăл витĕр шăхăрса хавaслă
Вăл Çĕр-Аннен кăкри çинче

Çӳренĕ, вăрманне вăл каснă,
Вăл пулă тытнă шывĕнче.

Çĕре кĕрсе выртма вăл урлăш
Çур аршăн, тăршшĕ пĕр хăлаç
Хăй вырăн иличчен вăл урнă,
Хăйне çеç пĕлнĕ ир те каç.

Вăл пулнă çĕр çинче хăватлă,
Чĕрчунсене чее ăспа
Тытса çиме вăл капкăн лартнă,
Ăста тĕл пенĕ пăшалпа.

Çуса иртет-и шалкăм çумăр,
Тӳпе кулать-и кăн-кăвак, —
Пуласчĕ çыннăн çын пек çăмăл,
Пĕлесчĕ ĕмĕтре чарак.

Вĕри тăхлан та хĕрнĕ хурçă
Çуман шăп пĕлĕт айĕнче
Ĕçленĕ чух ăна яр-уçă
Тăват енче те çут тĕнче.

Тарланă хыççăн хăпарту та,
Хуплу та хатĕр ун çиме.
Мĕн кирлĕ пулнă пырĕ тутă,
Чĕри те сывă этеме?

Хăй тăрансан та, куçĕ çăтă,
Пур чĕрчуна та кайăка
Вĕлернипе паян та сăтăр
Тăвать вăл çутçанталăка.

Ку капитализмăн саккунĕ
Тесе эс, критик, ан палка!

Ку саккуна пĕтернĕ хыççăн
Çур ĕмĕр иртнĕ. Эс, ача,
Ху кур та çыр тăп-тăрă пуçăн
Тĕп-тĕрĕс пулнине анчах.

Пурне те вăрăн. Эс харамăн
Ĕнси çине анчах ан хур,
Чĕрчун тытма эпир те хамăр
Пăшаллă икkenне те кур.

Пуху пухса ларма ахаль-и
Сунар союз та пирĕн пур.

Хăй сĕтелтен лутра, тин халĕ
Хăй селĕп чĕлхипе «мемме»
Текен ачан та пур пăшалĕ,
Пĕлместĕп, такама пеме.

Чăн çын тирпейлĕхне çухатнă
Этемккесем масар-çăва
Туса хурас пекех çаратнă
Çуллен-çул хамăр çĕршыва.

Хуркайăка персе сайратнă,
Кун пек тискер çаратăва
Чарман пирки кĕрсе хуплатнă
Чи-чи çерçи те хуплăва.

Вĕсем Нарспи пекех тухьяллă
Тĕвик-тĕвик текерлĕке
Çыртма валеçнĕ умĕн янă
Тĕпсĕр пыра тĕппи черкке.

Çĕр çурăлтăр! Çĕр хыпса çăттăр
Пур йĕксĕке те, тупата!

Ылханнă чух ман аллăм тăр-тăр
Чĕтренипе пером хута
Чĕрсе çырса пырсан: — Ах, Турă! —
Тесе ларатăп туртăшса.

Шыв урлă, вăрманпа хир тăрăх
Чуна çунтармăш шухăша
Çӳренĕ чух калам та урăх
Ан пăстăр, тетĕп, сывлăша!

Çӳлте те, çĕр çинче те Турă
Пулман та, пулмĕ тĕнчере.

Эппин, пире хăй тутă тунă,
Хăй пăхакан аннемĕре,
Пур вăхăтра та ĕмĕр-ĕмĕр
Çап-çамрăк çутçанталăка

Юратăр, турă пек ĕненĕр,
Пуç тайăр, хурăр касăка!

Эсир ăна хăйне хĕрхеннĕ,
Хăйне юп курнă вăхăтра
Вăл хăй те, сирĕн аслă аннĕр,
Хăй туса пынă пурлăхра
Пăхса тăрантĕ хăвăра.

Ачамăрсем тесе вăл савĕ,
Çуллен, Некрасов калашле,
Çуркуннехи ун ешĕл шывĕ
Сире те хăйĕнпе пĕрле,
Чăваш юрри каларăш, парĕ
Çап-çамрăк ĕмĕр, çитмĕле
Çитес чухне те авлантарĕ
Вун çиччĕри пек старике.

Ун вата юнĕнчен хăвалĕ
Вăл чир-чĕре те инкеке.

Йăваласах килмест ман халĕ
Леш кивĕ çĕтĕк кĕрĕкĕн
Шак хытнă аркине ахаллĕн,
Сăвва çӳп-çап пек кĕрекен
Анман йĕркесене мăранăн
Пĕр вĕçĕмсĕр çырса ларма
Малкай пек чунсăр, юнсăр манăн
Перо тытас-и аллăма?

Çук, эпĕ чухăн мар, леш хĕсĕр
Ĕне ют чĕчĕ ĕмнĕ пек
Пулман ĕнерсĕр, пулмăп тĕлсĕр,
Ман хамăн шухăш çуккипе
Перо тытман та, тытмăп пушă
Сăмах арманĕ авăртма.

Ансат çырсан, асту, хăрушă
Кайран хăвна та вулама.
Çук, критик мар, ĕне пăрушĕ
Кирлех ун чух хут чăмлама.

Ман хамăн шухăш, хамăн туйăм,
Пуçпа чĕре те пĕрлешсен,

Ăса пĕр харăс килнĕ вăййăм
Ем-ешĕл çĕршĕн кĕрешсен,

Хама этем туса çуратнă,
Чун панă çутçанталăка
Юратнипе чунпа хăватлă,
Ӳтпе те эпĕ яштака.

Хама тăван шывпа вăрманăм
Пурне те панипе анчах
Кирек хăçан та сывлăх манăн,
Силпи ачин, хура ачан,

Кервен пулсан, пĕр мăшăр милĕк
Тытса, ӳте унпа ачаш
Сĕрсе тухасшăн кĕнĕ ĕлĕк,
Кĕретĕп халĕ те мунча.

Таса чунпа та эпĕ сывă,
Таса сăнпа та хал хитре
Пулни çитмест мана — пур йывăç,
Пур чĕрĕ чун та тĕнчере
Эп хам вилсен те тепĕр ĕмĕр
Курмалăх юлтăм çĕр çинче.

Ан юлтăр шывсăр Çĕр-Аннемĕр,
Чĕрчунсăр тăлăх çут тĕнче!

Ялта йăвасăр тăрса юлнă
Чĕп-чапсăр çерçие пĕрре
Курсан та, шак хытать те юнăм,
Тарлантарса çӳрет ӳтре.

Тапать чĕре те хăвăрт-хăвăрт,
Пăшаллă вăрă çынсенчен
Хай тарăхса хăйне хăй тăвăр
Туять вăл кăкăр шăмминче.

Эсир мĕнле пурнасшăн хăвăр
Çерçи сассисĕр çĕр çинче?

* * *

Ман вăрçă хыççăн тӳсĕм пур-тăр,
Кĕрлевсене эп хам сахал
Илтмен пулин те, вăрă пуртă
Туклатнă е хурах пăшал

Çĕрле шăп сывлăша вăр та вăр
Çурса пăтратнă самантра
Вăраннипе чирлетĕп хăвăрт,
Ӳкетĕп эпĕ чăм тара.

Эсир, туссем, курман-и хăвăр
Юратнă вăрманта вăрра?

Мана хама курма та йывăр,
Çырма та чунăм кӳтесен.
Вăрман каччи пек çамрăк йывăç
Çын каснипе персе ӳксен,
Вăрман пики пек хӳхĕм кайăк
Çын пенипе лап ӳкнĕ чух
Хăйне амантнăн, хăй те кайăк
Пулса пек чунăм, мĕскĕн чун
Ылханнипе йĕрсе хӳхленĕ
Сасса итлерĕм тĕлĕкре.

Сĕт-çу çурхахĕ пек пĕркенĕ
Шап-шурă пĕлĕтлĕ ире,
Вăл кăвакарнă чух шăв-шавсăр
Сап-сарă хăмăллă хире
Тухаттăм эпĕ пĕр хавассăр,
Аса илтерчĕ тӳпере
Кар карлакан хаваслă сассăр,
Хура куракăмсем, сире!

*Çу уйăхĕн 5-мĕшĕ,*
*1979*